# «Хам халăхăн пуласлăхне шанса çеç...»

(Илле Тукташ сăвăç, прозаик, куçаруçă, Чăваш Республикин Гимнĕн авторĕ çуралнăранпа 110 çул çитнĕ май)

**Чăваш литератури, культурипе ÿнерĕ аталанăвĕнче Илле Тукташ сăвăç, прозаик, куçаруçă, литература тĕнчевçи, фольклорист тÿпи питĕ пысăк. Вăл çуралнăранпа август уйăхĕнче 110 çул çитет. Вăл çырнă «Тăван çĕршыв» сăвва пĕлмен чăваш çук та пулĕ çĕр çинче.**

Пирвайхи хут Илле Тукташ сăввисемпе Герман Лебедев кĕвĕленĕ «Тăван çĕршыв» юрă 1945 çулта Чăваш патшалăх академи драма театрĕнче Петр Осиповăн «Тăван çĕршыв» пьеси тăрăх лартнă спектакльте янăранă. Куракансем кĕвве ура çине тăрсах итленĕ, вăл кашни çын чунне пырса тивнĕ, телейлĕ те мирлĕ пурнăç символĕ пулса тăнă. Тен, çавăнпа та пулĕ «Тăван çĕршыв» юрă «Чăваш Республикин Патшалăх символĕсем çинчен» калакан саккунпа килĕшÿллĕн, ăна 1997 çулхи июль уйăхĕн 14-мĕшĕнче йышăннă, Чăваш Республикин Патшалăх гимнĕ пулса тăнă.

Гимнăн кĕввипе сăмаххисем чăваш халăх юррине çывăх, çав вăхăтрах унра хальхи самана таппи уççăн илтĕнет, унăн савăнăçлă та çĕкленÿллĕ сасси пирĕн чĕресенче мăнаçлăх çуратать, пире Чăваш Ен çутă малашлăхĕшĕн чунтан парăнса ĕçлеме хавхалантарать. Чăваш уявĕ çак сăвапла юрăран пуçланать. Патшалăх гимнĕн тексчĕ сăнарсен виçĕ ушкăнне пĕтĕçтерет: çут çанталăк чĕрĕлни; тăванĕсем, атте-анне, ача-пăча – çемье пĕрлĕхĕ; Чăваш тĕнчинчи пĕтĕм халăх туслăхĕ килĕшĕвĕ. Çапла вара «Тăван çĕршыв» юрă çыравçă пултарулăхĕнчи чи пысăк çитĕнÿ пулса тăчĕ.

Илья Семенович Тукташ 1907 çулхи августăн 2-мĕшĕнче Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи Мăн Тукташ ялĕнче чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралса ÿснĕ. Тăван ялти шкултан вĕренсе тухнă хыççăн 1918-1919 çулсенче – Ураскилтри, Элĕкри икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Пиччĕшĕ 1923 çулта Граждан вăрçинчен таврăнсан çамрăк Илле Хĕрлĕ Чутайри шкулăн иккĕмĕш сыпăкĕнче вĕренме тытăннă, унта ăна комсомола илнĕ. 1924 çулта вăл Ураскилтре ачасене вĕрентме пуçлать. 1925 çулта пĕр вăхăт Атикасси вулăсĕнчи комсомол организаторĕ пулса ĕçлет. 1926 – 1928 çулсенче вăл Шупашкарти партипе совет шкулĕнче вĕренет. 1931 – 1933 çулсенче Илле Тукташ, ун чух ĕнтĕ паллă поэт, Самарти геологипе шырав институтĕнче вĕренет. Пĕр вăхăтрах чăвашла тухса тăракан «Колхозник» хаçатра яваплă секретарьте вăй хурать. «Вăтам Атăл» альманах кăларас ĕçе хастар хутшăнать. Çак вăхăтра унпа пĕрле В.Иванов-Паймен, Исаев Мĕтри, И.Викторов, С.Шавли тата ытти çыравçăсем те ĕçленĕ. Тĕрлĕ çулсенче вăл Элĕк вулăсĕнчи комсомол комитетĕнче, «Хатĕр пул» журналăн тата «Çамрăк хресчен» хаçатăн яваплă секретарĕнче, ялти шкул учителĕнче, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕнче тăрăшнă. 1935 – 1942 çулсенче, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине кайиччен, Илья Семенович Шупашкарти наукăпа тĕпчев институчĕн сотрудникĕнче тимлет. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче Илья Тукташ дивизи хаçачĕн редакторĕнче ĕçленĕ, çар корреспонденчĕ пулнă.



Вăрçăран вăл йывăр чирлесе килнĕ. Каярах чăваш писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ пулса ĕçлет. Илле Тукташ чăваш литературин тĕнчине «Курасса эп шутламанччĕ» сăвăпа килсе кĕнĕ. Сăвă 1927 çулта «Çамрăк хресчен» хаçатра ноябрь уйăхĕн 7-мĕшĕнче пичетленсе тухнă, ун чухне поэт çирĕмре кăна пулнă. Сăвăра Тукташ çĕнĕ самана халăха ирĕк пани, ăна пĕрлештерни çинчен хумханса çырать. Унтанпа çак сăвă пĕрре те пичетленмен.

Литературăри хушаматне вăл хăйĕн тăван ялĕ ятĕнчен илет – Тукташ. Çапах та тĕрлĕ çулсенче вăл И.С-ов, Эрнер Элли, И.Семенов, И.Илсемен тата ытти псевдонимсемпе алă пусса тĕрлĕ хайлавсем пичетлет. Çамрăк çыравçăн кашни сăввиех вулакана тыткăнланă. Хайлавсенче вăл тавралăха урăхла курма, унăн илемлĕхне туйма пĕлни сисĕнет, сăмаха тÿррĕн калани палăрать. 1931 çулта Илле Тукташ çырнă «Вăкăр çырми» повеçе вулакан питĕ ăшшăн йышăннă. Вăл «Трактăр», чăваш пролетари писателĕсен ассоциацийĕн литература, критика, политика альманахĕн 2-мĕш кĕнекинче кун çути курнă. Унта вăл хăй куçĕпе колхозсем тăвас анлă юхăм тапранса кайнине сăнать. Часах хайлав чăваш классики шутне кĕнĕ. Колхозлă ял пурнăçĕ çинчен калакан произведенисем – сăвăсем, калавсем, очерксем – И.Тукташ каярах та сахал мар çырнă. Вĕсенчен паллăраххисем: «Çĕр хуçисем», «Сăвăсемпе юрăсем».

Тукташ – чăваш литературине халăх юррисем майлă юрăсем çырнипе палăрнă поэт та. Григорий Хирбю, Герман Лебедев, Аристарх Орлов-Шуçăм, Филипп Лукин, Геннадий Воробьев, Анисим Асламас тата чылай чăваш композиторĕсем Илле Тукташ çырнă сăвăсем тăрăх юрăсем кĕвĕленĕ. Унăн «Шур кăвакарчăн», «Шур Атăлта акăш», «Сарă хĕр», «Тăван çĕршыв», «Ай маттур, пит маттур», «Чаплă ĕмĕр çыннисем» тата ытти юррисем халăхра анлăн сарăлнă. Мĕншĕн тесен вĕсем ĕç çынни шухăш-ĕмĕчĕсемпе тата кăмăл туртăмĕпе пĕр кĕвĕллĕ пулнă.

Илле Тукташ пултарулăхĕ анлă, нумай енлĕ, вăл поэзипе кăна çырлахса тăмасть. Тукташ-прозаик вулакансене тарăн шухăшлă повеçсемпе калавсем, тĕрлĕ очерксем парнелет: «Вăкăр çырми», «Тĕпел кукринче»», «Кĕрхи каç», «Пурнăç пуçламăшĕ», «Шурă роза», «Чĕре калаçать» тата ытти хайлавсене вăл чăн-чăн поэт чунĕпе хавхаланса çырать. Унăн «Кĕске калавĕсем» вара сăвă пекех вуланаççĕ. Мĕн ачаран Илле Тукташ халăх сăмахлăхĕпе кăсăкланнă, халăхăн иксĕлми пуянлăхне – фольклорне – пухас ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунă. Çыравçă хатĕрленĕ «Чăваш фольклорĕ» ятлă кĕнеке икĕ хутчен пичетленсе тухнă – 1941 тата 1949 çулсенче. Тукташчен чăваш юрри-сăввипе юмах-халапне никам та кирлĕ таран пĕтĕçтерсе паман, наука кăтартнă пек тĕпчесе тухса хакламан.

Пултаруллă çын нумай енлĕ пултаруллă. Илле Тукташ драматургсен ретĕнче те тивĕçлĕ вырăн йышăнма пултарчĕ. Вăл хайланă «Хĕвел чечекĕ» пьесăна 1953 çулта Чăваш драма

**Литературăри хушаматне вăл хăйĕн тăван ялĕ ятĕнчен илет – Тукташ. Çапах та тĕрлĕ çулсенче вăл И.С-ов, Эрнер Элли, И.Семенов, И.Илсемен тата ытти псевдонимсемпе алă пусса тĕрлĕ хайлавсем пичетлет.**

театрĕнче лартни чăваш культурипе ÿнер тĕнчинче пысăк пĕлтерĕшлĕ пулăм пулса тăчĕ. Пьесăн тĕп конфликчĕ – ырăпа усал, çутăпа тĕттĕм кĕрешĕвĕ. Çыравçă куçарура та ăнăçлă ĕçленĕ, ăста тăлмачă шутланнă. Тĕнче, вырăс писателĕсен произведенийĕсем В.Шекспир сонечĕсене, М.Шолоховăн «Лăпкă Дон» романне, М.Горькин «Хĕрпе вилĕм» тата «Кăйкăр çинчен хунă юрă» калавĕсене, В.Лебедев-Кумач, С.Алымов юррисене, вырăсларан чăвашла куçарнă. Эпир вĕсене паян чăвашла вулама пултаратпăр. Иван Ивникпе пĕрле куçарнă вырăс эпосне – «Игорь полкĕ çинчен хунă юрра» чăваш ачисем хапăл туса йышăннă, паян та чунтан юратса вулаççĕ.

Тукташа лайăх пĕлнĕ çыравçăсем, тăванĕсем пурте тенĕ пек унăн кулăш туйăмĕ çивĕч пулнине палăртнă. Йывăр чире пăхмасăрах Илья Семенович юптарма, култарма, тăрăхлама питĕ юратнă.

Пултаруллă поэтăн ĕмĕрĕ кĕске пулнă, 1957 çулта Илле Тукташ çĕре кĕнĕ.

Илле Тукташăн пуян та нумай енлĕ эткерĕ чăваш литературин, культурипе ÿнерĕн уйрăмлми пайĕ пулса тăчĕ. Чăваш Республикин наци библиотекин фондĕнче çыравçăн кашни пичетленсе тухнă кĕнеки, сăввиюрри упранать. Унăн пурнăçĕпе пултарулăхне тĕпчевçĕсем валли тĕпчемелли туллиех.

**Галина СОЛОВЬЕВА,**
**наци библиотекин «Чăваш кĕнеки» центрĕн ертÿçи.**